# Çĕнтерӳ çулĕ

1930 çулхи ноябрĕн
1-мĕшĕнчен тухать

сайт адресĕ: putpobedy.ru

электронлă адрессем:
press_vurnar@rchuv.ru
svetok11@mail.ru

ВĂРНАР РАЙОН ХАÇАЧĔ 2025 çул кăрлач /январь/ уйăхĕн 28-мĕшĕ • ытларикун • 6/11853 № • Хакĕ ирĕклĕ •

## Нина Кузьмина: «Ĕмĕр иртнине сисмерĕм те...»

**Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче фашизм юхăмне аркатнă, тылра хастарлăхпа палăрнă ăру умĕнче эпир ĕмĕр парăмра. Вăрçă хыççăн та çĕршыва уралантарассишĕн кунне-çĕрне уямасăр хура тар тăкнă вĕсем. Вăрнар тăрăхне аталантарассишĕн нумай çул вăй хурса ĕçленĕ ветерансене сумлă юбилейĕсемпе чысласа саламласси ырă йăлара.**



Н.Кузьмина тăванĕсемпе пĕрле.

### КУН-ÇУЛ

Кайри Тукай ялĕнче пурăнакан Нина Николаевна Кузьмина та çакăн пек хисепе тивĕçнĕ. 95 çулти ветерана, тыл ĕçченне округ пуçлăхĕн заместителĕ–экономика пайĕн пуçлăхĕ Светлана Шашкарова, Раççей ветеранĕсен союзĕн округри уйрăмĕн председателĕ Николай Васильев, территори пайĕн пуçлăхĕ Инна Трофимова, культура учрежденийĕн ĕçченĕсем чун-чĕререн ăшшăн саламланă.

– Сирĕнпе тивĕçлипе мухтанатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, çывăх çынсен юратăвне тата хисепне туйма, чун канăçлăхĕпе ăнăçу сунатпăр, – тенĕ хăнасем. Светлана Шашкарова Нина Николаевна патне Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн, округ администрацийĕн пуçлăхĕн Надежда Никандрован саламлă çырăвĕсене те çитернĕ.

Нина Кузьмина Канаш районĕнчи Ачча ялĕнче çуралса ӳснĕ. Унăн ачалăхĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин çулĕсене килнĕ. Вăйпитти çынсем фронта кайсан çула çитменнисен черченкĕ хулпуççийĕсем çине мĕнпур йывăр ĕç тиеннĕ. 11–12 çулсенчи хĕрача çитĕннисемпе тан фермăра та, уй-хирте те пилĕк авнă. Тул çутăлнăçутăлман ĕçе тытăннă. Йывăрлăхсене шăл çыртса тӳссе ирттернĕ. Çитĕнсен чукун çул çинче те ĕçленĕ.

1956 çулта Кайри Тукай яш каччипе пĕрлешсе çирĕп çемье чăмăртанă. Пилĕк ывăлпа пĕр хĕре çут тĕнче парнелесе пурнăçăн анлă çулĕ çине тăма пулăшнă. Мăшăрĕпе иккĕшĕ «Янгорчино» хуçалăха аталантарассишĕн ырми-канми тăрăшнă. Ĕçри хастарлăхшăн чылай награда илме тивĕçнĕ. Кузьминсем çăматă йăвалама та ăста пулнă. Ачисене те ал ĕçне вĕрентнĕ. Кил хуçалăхĕ çирĕп пулнă, картиш тулли выльăх-чĕрлĕх тытнă. «Ĕмĕр иртнине сисмерĕм те...» – тет ватă çын.

Халĕ кинемин 15 мăнукпа 21 кĕçĕн мăнук. Вĕсем Нина Николаевнăна савăнăç кӳреççĕ, пурнăçра хавхаланса пурăнма вăй-хăват параççĕ. Юбиляр ачисен тимлĕхне те туйса тăрать. Вĕсем те хаклă амăшне тăван кил ăшшине упраса чирчĕр мĕнне пĕлмесĕр нумай çул пурăнма сунаççĕ. «Эпир, анне, санпа мăнаçланатпăр, эсĕ пирĕншĕн ылтăнран хаклă», – теççĕ.

Нина Кузьмина «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçатăн аслă тусĕ. Нумай çул ăна çырăнса илет. Качча килсен туслашнă та паянхи кун та «Çĕнтерӳ çулĕнчи» хыпарсемпе кăсăкланса тăрать. Куç çивĕчлĕхĕ чакнăран хунямăшне хăшпĕр статьясене кинĕ Елена Анатольевна вуласа парать.

Нина Николаевна çĕршывра, тĕнчере пулса иртекен пулăмсене пĕлсех тăрать, пур çĕрте те тăнăç пурнăç хуçалантăр тесе ĕмĕтленет, салтаксене Çĕнтерӳпе таврăнма пиллет.

Редакци коллективĕ хастар ветерана, хаçатăн çывăх тусне 95 çулхи юбилей ячĕпе саламласа çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хăват, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунать.

**Елена ПОРФИРЬЕВА**

### АСТĂВĂР!

**Январĕн 31-мĕшĕнче 11 сехетре республика Пуçлăхĕ Олег Николаев Патшалăх Канашне Çырупа тухĕ.**

**Çакна регион ертӳçин Телеграм каналĕнче, Вконтакте ушкăнĕнче, Чăваш наци телекуравĕпе, «Россия 24» каналпа курма, Чăваш наци радиовĕпе тата «Тăван радиопа» итлеме пулĕ.**




## Тӳлеве ӳстернĕ

**Чăваш ен Пуçлăхĕ Олег Николаев контрактниксене паракан тӳлеве 2,1 млн тенке çити ӳстерме йышăннă. Владимир Путин хушăвĕпе çирĕплетнĕ 400 пин тенкĕ федераллă тӳлевпе пĕрле вăл 2,5 млн тенкĕпе танлашĕ.**

### КОНТРАКТ СЛУЖБИ

Пулăшăвăн çĕнĕ мери 2025 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса мартăн 31-мĕшĕччен Чăваш енре çырнă мĕнпур контракта пырса тивет.

Аса илтеретпĕр, 2024 çулхи декабрьтен федераллă саккунпа килĕшӳллĕн СВО-н уйрăм участникĕсен тăсса янă кредичĕсене хупма (10 млн тенкĕ таран) май пур.

«Тăван çĕршыва хӳтĕлесси – сăваплă мисси. Ăна пирĕн каччăсем пысăк чыспа пурнăçлаççĕ. Эпир вĕсемпе мухтанатпăр, пур енлĕ пулăшма тăрăшатпăр», – палăртнă Олег Николаев.

## Пурнăça тăсас тесе

ВĂРĂМ ТА ХАСТАР ПУРНĂÇ
РАÇÇЕЙ НАЦИ ПРОЕКЧĔСЕМ

**Республикăра аслă ăрури çынсене тимлĕх уйăрас тĕллевпе 2025–2030 çулсем валли «Хастар вăрăм пурнăç» программа хатĕрленĕ.**



Ăна Раççей Правительствин премьерĕ Михаил Мишустин «Çемье» стратеги сессийĕнче тăратнă сĕнӳпе килĕшӳллĕн йышăннă. Документ çулланнă çынсен пысăк йышне пырса тивмелле, вĕсен ватлăхри хастар пурнăçне тивĕçтерме пулăшмалла.

Шел те, пăшăрханмалли пур. Халăх ватăлсах пырать. Республикăра пурăнакан 284 пин çын – халăхăн 24,4% – ĕçлеме пултаракан çулсенчен аслăрах. Çак условисенче вĕсен хастар çулĕсене тăсни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Апла-тăк ку ыйту пырса тивекен кашни ведомство çак енĕпе çине тăрса ĕçлеме тивĕç. Йышăнакан мерăсем çынсен пурнăçĕн вăтам тăршшĕне 2030 çул тĕлне 77,48 çула çитерессине тивĕçтермелле. Танлаштарма, халь ку кăтарту 73,21 çул шайĕнче.

Çак тĕллеве пурнăçламашкăн çулланнă çынсене спортпа туслашма пулăшмалла, волонтер ĕçне явăçтармалла, инвалидсемпе çыхăннă тимлĕхе ӳстермелле тата ытти те. «Программа çулланнă çынсен пурнăç условийĕсене лайăхлатассине, вĕсене пулăшассине тĕпе хурать. Вĕсен культура, вĕрентӳ, спорт пурнăçне хутшăнмалли майсем пулмалла, çакă ватăсене çĕнĕ хăнăхусене алла илме, сывлăха çирĕплетме пулăштăр», – пĕлтернĕ ĕçлев министрĕ Алена Елизарова. Паллах, çакăн валли тивĕçлĕ инфратытăма та аталантармалла.

2030 çул тĕлне кашни округрах «Манăн социаллă центр» ĕçлесе каймалла. Хальлĕхе вĕсем республикăра 13. Вăл пирĕн округра та пулмалла. Кун пирки иртнĕ эрнере пирĕн тăрăхра ирттернĕ Правительство кунĕнче пĕлтернĕччĕ.

## Çĕнĕ меслет палăртма пулăшĕ

**Ӳт онкологине çĕнĕ меслетпе тупса палăртма пулĕ.**



«Вăрăм та хастар пурнăç» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн республикăри ӳтпе венерологи диспансерне хальхи йышши оборудовани кӳрсе килнĕ.

Ӳт-пӳ чирĕсене палăртакан хатĕр Тур паллисене 140 хут пысăклатса тĕпчеме май парать. Çапла чир аталаниччен самай маларах тĕрĕс диагноз лартма пулать.

Çак тĕрĕслев витĕр тухма уйрăмах ӳт çинче нумай Тур паллиллĕ çынсене, хĕвел питтинче нумай вăхăт ирттерекенсене сĕнеççĕ. Çавăн пекех çутă ӳтлисене тата йăхра рак чирĕпе аптракансем пулнă пулсан.

### ÇАНТАЛĂК

**Кĕçнерникун 30.01**: кăнтăрла +2, çĕрле +1

**Эрнекун 31.01**: +2, 0

**Шăматкун 01.02**: +1, 0

*«Яндекс погода» информацийĕ тăрăх.*



### УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число | | 30.01 | 31.01 | 01.02 |
|---|---|---|---|---|
| Хĕвел | тухать | 07.48 | 07.46 | 07.44 |
| | анать | 16.19 | 16.22 | 16.24 |
| Кун тăршшĕ | | 08.31 | 08.36 | 08.40 |
| Уйăх тăхри | | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать |
| кунĕ | | 2 | 3 | 4 |

# Ырă кăмăллă, пысăк туйăмлă

**Кăрлач уйăхĕн 26-мĕшĕнче Çĕрпел салинче пурăнакан Ираида Игнатьевна Андреева хăйĕн 85 çулхи юбилейне паллă турĕ.**

## ОКРУГ ÇЫННИСЕМ



Паллă çак кун ăна пĕтĕм çемйи – чи хаклă, юратнă ачисем, мăнукĕсемпе кĕçĕн мăнукĕсем – ăшшăн саламларĕç. Кӳршĕсем те ăна куçран вĕçертмерĕç, сывлăх, вăрăм кун-çул сунчĕç.

Ираида Игнатьевна ырă кăмăллă, туйăмлă, тимлĕ çын. Вăй çитнĕ таран çемйине кăна мар, хăйĕн пулăшăвĕ кирлĕ кашни çынна пулăшать. Унăн пурнăçĕ, хăйĕн ăрăвĕнчи ытти çынсенни пекех, йывăр пулнă. Ачалăхĕ вăрçă çулĕсенче иртнĕ. Вăл ашшĕне чĕрĕ астумасть. Ашшĕ 1943 çулта вилнĕ чухне пĕчĕк Ира 2,5 çулта пулнă. Амăшĕ тăватă пĕчĕк ачапа пĕчченех тăрса юлнă.

– Вăрçă чарăнсан чӳрече умне ларса салтаксем Çĕнтерӳпе таврăннине савăнса пăхса ларттăмăр. Ыттисен ашшĕсем таврăнаççĕ пулсан, пирĕн те атте таврăнатех тесе, ачалла, айванла пĕтĕм чĕререн ĕненеттĕмĕр, – тесе чун ыратнипе аса илет Ираида Игнатьевна.

Паянхи кун вара вăл вăй-хăватпа пурăнать. Мăшăрĕпе, Георгий Ильич Андреевпа, пилĕк ача çуратса ӳстернĕ. Шăпана нихăçан та ӳпкелешмест Ираида Игнатьевна, юратнă ачисемпе мăнукĕсем яланах юнашар, пурнăç çине пысăк шанăçпа, хаваслăхпа пăхать.

## Саламлатпăр!



Юратнă та хисеплĕ çыннăмăр, мăшăр, атте, кукаçи-асатте – **Çĕньял Хапăсра пурăнакан Валерий Васильевич ИВАНОВ** – январĕн 30-мĕшĕнче 70 çул тултарать. Сумлă юбилей ячĕпе хаклă çыннăмăра чун-чĕререн ăшшăнăшшăн саламлатпăр. Кун-çул сукмакĕпе малалла та хастаррăн утăмлама тулли телей, хурçă пек çирĕп сывлăх, çĕнĕ вăй-халпа савăк кăмăл, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Ачусемпе мăнукусен пархатарĕ, вĕсен юратăвĕпе тимлĕхĕ, йышлă тăванусен хисеплĕ чун-чĕрӳне ăшătса тăтăр, хавхалану кӳтĕр. Çутă ĕмĕт-тĕллевӳсем пурнăçланса пыччăр, кашни пуçланă ĕçӳ яланах ăнăçуллăн вĕçлентĕр. Кил-çурту савăнăçпа, ырлăхпа тултăр, çемьере юратупа килĕшӳ хуçаланччăр.

*Иртет-çке вăхăт, çитрĕ юбилей,*
*Çак йышпа сана халь саламлатпăр.*
*Хĕвеллĕ пурнăç, иксĕлми телей,*
*Çут ăраскаллă ĕмĕр, ăнăçу сунатпăр.*

**Мăшăрĕ, ывăлĕсем, хĕрĕсем, кĕрӳшĕ, кинĕсем, мăнукĕсем, йышлă тăванĕсем.**

# Ăнăçлăха тивĕçтерме

**«Работа России» центр пулăшăвĕпе пĕлтĕр республикăра 2 пин ытла социаллă контракт çырнă – пĕтĕмпе 400 млн ытла тенкĕлĕх.**

ДЕМОГРАФИЯ
НАЦИОНАЛЬНЫЕ ПРОЕКТЫ РОССИИ

## ПУЛĂШУ

Ĕç шырассипе çыхăннă программа, акă, (ăна валли 86 млн тенкĕ янă) ĕççĕр граждансене курăмлă тĕрев панă. Уйăрнă укçан пысăк пайĕ вара – 255 млн тенкĕ – харпăр хăй ĕçне уçас тексенсене пулăшма кайнă. Уйрăм хушма хуçалăха аталантарас текенсем валли уйăрнă 65 млн тенкĕ те – ял çыннисемшĕн пĕлтерĕшлĕ пулăшу.

Пĕтĕмлетнĕ тăрăх, 2024 çулта ĕç шырассипе çыхăннă контрактсене çырасси 9,1 процент ӳснĕ. Çак цифрăсем ку программăсемпе çынсем усă курнине, вĕсем ыйтусене татса пама май панине çирĕплетеççĕ. Харпăр хăй ĕçне уçма килĕшӳ çырнисем вара – 712-е, хушма хуçалăха аталантарма 309-а çитнĕ.

Унччен çынсен ăнăçлăхне тивĕçтерессипе «Демографи» наци проекчĕ нумай ĕç пурнăçланă-тăк, кăçалтан «Çемье» çĕнĕ наци проекчĕ старт илнĕ. Ун тĕллевĕ – демографи лару-тăрăвне лайăхлатасси, çемьесен ăнăçлăхне (çав шутра – ĕç тĕлĕшпе те) ӳстересси.

# Чăваш енре те ĕçлеме тытăнĕ

## Раççей Президенчĕн хушăвĕпе Чăваш енре «Время СВОих» программăна пуçарса ярасшăн

**2024 çулта Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн хушăвĕпе СВО-на хутшăнакансене валли «Время героев» управлени кадрĕсене хатĕрлеме ятарлă программа пуçарса янă. Çакăн евĕр программăна кăçал Чăваш енре те ĕçе кĕртме чĕнсе каланă регион Пуçлăхĕ Олег Николаев.**

## ÇĔНĔЛĔХ

«Ку тĕлĕшпе эпир тахçанах тĕллевсене пурнăçа кĕртсе пыма тытăннă. РФ Президенчĕн хушăвĕ пирĕн ĕç хăвăртлăхне ӳстерме витĕм кӳрет. Ятарлă çар операцийĕн участникĕсем республикăн пурнăçне хутшăнма кăмăл туни куçкĕрет. Ĕçлев министерстви профессисене палăртса хунă. СВО-ран килекен яшсемпе паттăрсене валли хушма пĕлӳ паракан центрсенче тавракурăма ӳстерме, паянхи пурнăç ыйтакан профессисене алла илме хăтлă условисем йĕркеленĕ. Паттăрсем тĕрлĕ сферăсенче ĕçлеме кăмăл туни те никамшăн та вăрттăнлăх мар. Вĕрентӳ тытăмĕнче те вĕсен йышĕ сахал мар. Паллă, патшалăх тата муниципалитет сферинче ĕçлеме хăйнеевĕр специфика кирлĕ. Ăна шута илсе, шăпах та асăннă программăна регионта пурнăçа кĕртме шутларăмăр», – палăртнă республика Пуçлăхĕ Олег Николаев.

Конкурса СВО-ра пулнисем кăна мар, çар служащийĕсем-ветерансем те хутшăнаяççĕ. 2025 çул вĕçленнĕ тĕле программăна хутшăнакансенчен 20 процентĕ ĕçе вырнаçасси те куçкĕрет. 2026 çул вĕçленнĕ тĕле кăтартăва 80% кая мар çитерме тĕллев лартнă.

Проектăн йĕркелӳ ушкăнне специалистсем, общеcтвăлла лидерсем, культура, наука ĕçченĕсем кĕрĕç. Пысăк тавракурăмлă управленецсемпе пĕрле çитĕнекен яшсене тĕрĕс çул çине тăма, çĕршыва парăнса, уншăн пысăк кăтартусемпе ĕçлесе пыма вĕрентĕç. Предприятисемпе организацисен ертӳçисем, депутатсем хăйсен паха ĕç опычĕпе паллаштарса çитĕнӳсем патне туртăнма витĕм кӳрĕç.

Çĕршывăмăрăн, регионăн социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвне пĕр тикĕссĕн аталантарса пырас тесен пурин те яваплăха туйса, хăйсене шанса панă ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пыма чĕнсе каланă регион Пуçлăхĕ.

# Темле те улталаççĕ

**Раççейре пурăнакансен Телеграм каналĕнче Mamont вирус салатаççĕ.**




Ултавçăсем чеен хăтланаççĕ. «Это ты на видео?» – тесе файл ярса параççĕ. Ăна уçсан телефона вирус ерет, вăл мĕнпур информацие вулама пултарать, сиен кӳрекен файла ыттисене ярса парать.

Тимлĕ пулăр! Пĕлĕш-юлташа асăрхаттарăр!

Сăмах май, иртнĕ çул аферистсем Раççейре пурăнакансенне миллиардшар тенкĕ вăрланă. Пĕр çыннăнне вара 180 миллион тенке яхăн йăкăртма май тупнă.

## ХĂРУШСĂР ПАХАЛĂХЛĂ ÇУЛСЕМ

# Наци проекчĕ пулăшнипе

БЕЗОПАСНЫЕ КАЧЕСТВЕННЫЕ ДОРОГИ
НАЦИОНАЛЬНЫЕ ПРОЕКТЫ РОССИИ

**«Хăрушсăр пахалăхлă çулсем» наци проекчĕн майĕпе республикăра пĕлтĕр 80 километр енне çул-йĕр сетьне çĕнетсе йĕркене кĕртме пултарнă: 53 километр – регион шайĕнчи трассăсене, 25 километр – вырăнти çулсене. Çавăн пекех тăватă кĕпере хута янă тата 9,4 километр çутă тытăмне çĕнĕрен тунă.**



Наци проекчĕпе пирĕн округ территорийĕпе иртекен участоксене те юсав ĕçĕсем пырса тивнĕ. Акă, астăватпăр, пĕлтĕр çул-йĕр саракансем «Калинино – Патăрьел – Елчĕк» автоçул çинче те пысăк участокра вăй хучĕç. Кунта шăтăк-путăклă, нормативсене тивĕçтермен вырăнсенче асфальт сийне çĕннипе улăштарнă.

2025 çултан «Пурнăç инфратытăмĕ» проект çул-йĕр модернизацийĕн мероприятийĕсене малалла йышăнчĕ. Вĕсене Вăрнар тăрăхĕнче те пурнăçлĕç.

Вăрнар округĕнчи Правительство кунĕнче те çул-йĕр хуçалăхĕн аталанăвне сӳтсе явнă. Çĕнĕ комплекслă программа йĕркипе пурнăçа кĕртмелли проектсене те палăртнă. Çав шутра регион шайĕнчи сетьсен пирĕн округри пайĕсене те тĕпрен юсама пăхнă: «Шăхасан – Калинино», «Вăрнар – Упи–Красноармейски», «Шупашкар – Сурское» автоçулсем çинче.

**Ирина ЯКОВЛЕВА**

# Хушма индексаци пулĕ

## ПЕНСИСЕМ

**Январь уйăхĕнче ĕçлекен тата ĕçлемен пенсионерсен пенсийĕсене 7,3 процент таран ӳстерчĕç.**

Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн хушăвĕпе февраль уйăхĕнче хушма индексаци пулмалла. Страхлав пенсийĕсене январьтенех 9,5 процент таран хăпартса февраль уйăхĕнче хушса тӳлĕç. Çар пенсионерĕсен пенсийĕсене те индексацилĕç. Ӳсĕме шута илсе вăтам пенси виçи 25 пин тенке çитмелле.

Унсăр пуçне февраль уйăхĕнчен 40 енне социаллă пособисемпе компенсацисем, тӳлевсем ӳсĕç. Тĕслĕхрен, ача çуралнă чухне пĕр хутчен тӳлекен, ачана 1,5 çул тултариччен пăхнăшăн паракан пособисем, çăмăллăхсем илекен граждансен (инвалидсен, çар хирĕçтăрăвĕсен ветеранĕсен, Раççей Геройĕсен, Ĕç Геройĕсен тата ыт.) уйăхсеренхи укçа-тенкĕ тӳлевĕ (ЕДВ). Амăшĕн капиталне те индексацилĕç. Пĕрремĕш ачашăн ун виçи 660267 тенкĕпе, иккĕмĕшĕшĕн 912162 тенкĕпе танлашĕ.

# Штрафстоянка хакĕ ӳснĕ

**Кăçалтан эвакуацие штрафстоянка хакĕсем ӳснĕ.**



2025 çулта Шупашкар тата Çĕнĕ Шупашкар хулисенче йĕркене пăснă машинăна ятарлă вырăна кайса лартнăшăн 1810 тенкĕ те 32 пус тӳлемелле. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан 100 тенке яхăн хаклăрах.

Транспорта штрафланисен лапамĕнче пĕр сехет тытнăшăн тĕп хулара 77 тенкĕ те 72 пус памалла. Çĕнĕ Шупашкарта – 99 тенкĕ те 91 пус.

Машинăна ятарлă стоянкăна ăсатма пуринчен ытла Элĕк, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Вăрмар, Çĕрпӳ, Шупашкар, Тăвай округĕсенче тăкаклă. Унти хак – 2 пин те 11 тенкĕ те 46 пус. Вăрнар тата Йĕпреç тăрăхĕсенче – 1 пин те 609 тенкĕ те 17 пус.

Вăрнар округĕнче хуçине кĕтсе ларакан машинăшăн сехетне 61 тенкĕ те 6 пус тӳлемелле, ытти тăрăхра – 111 тенкĕ.

# Астăвăма упрани малашлăхшăн кирлĕ




**2025 çул Раççей шайĕнче те, республикăра та пĕрешкел патриотлăх, пĕрлĕх сĕмĕпе иртĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 80 çул çитнине халалласа, ку çул çĕршыв хӳтĕлевçисене, паттăрĕсене мухтакан, тĕрлĕ ăрусене пĕрлештерекен интереслĕ мероприятисемпе тулли пулĕ. Вĕренӳ учрежденийĕсем те астăвăм тĕлпулăвĕсене, Хăюлăх урокĕсене, конкурс-викторинăсене ачасемпе çамрăксене явăçтарассине пысăк тӳпе хывĕç.**

## ПАТРИОТИЗМ

Раççейри Тăван çĕршывăн хӳтĕлевçин тата Чăваш енри Çĕнтерӳпе патриотизм çулталăкне шкулсем халех активлă хутшăнма тытăнчĕç ĕнтĕ. Пуринче те тематикăллă мероприятисем тăтăш иртеççĕ.

Кĕçĕн Кипек шкулĕнче, акă, çак кунсенче вĕренекенсем торжествăлла линейкăна пуçтарăннă. Унта ятлă-сумлă, ачасене патриотлăх тĕслĕхĕ кăтартакан хăнасем чылайăн килсе çитнĕ.

Андрей Дмитриев, сăмахран, Çурçĕр Кавказри çар хирĕçтăрăвĕсен участникĕ, Хăюлăх орденĕн кавалерĕ. Çавăн пекех Раççей шалти ĕçсен органĕсен ветеранĕ те. Андрей Витальевич ачасене çар пурнăçĕ тата «вĕри точкăсенче» çĕршыв интересĕсене хӳтĕлеме тивни çинчен, полици тытăмĕнчи çăмăл мар служба пирки кăсăклă каласа кăтартнă. Запасри офицер Борис Иванович Сергеев вара – педагогика ĕçĕн ветеранĕ. Вăл та çамрăк тусĕсене тăван тăрăхăн историне пĕлмеллине, аслă ентешĕсен паттăрла ĕçĕсене асра тытса вĕсемпе хавхаланмаллине каланă. Патриотизм ахаль сăмах мар, вăл чун туртăмĕ пулнине, Тăван çĕршыва, халăха виçесĕр юратнине пĕлтернине çирĕплетнĕ.

Кĕçĕн Кипек шкулĕн вĕренекенĕсем те маттур. Вĕсем патриотлăх акцийĕсенче хастарлăх кăтартаççĕ. Чи активлисене, çивĕччисене, акă, линейкăра Тав хучĕсемпе палăртнă.

Хăюлăх урокĕсем малалла классенче тăсăлнă. Ачасемшĕн чăннипех вĕрентӳллĕ, усăллă иртнĕ вĕсем. Çĕршыв аваллăхĕ, Раççей Хĕçпăшаллă Вăйĕсем пирки нумай çĕннине, интереслине пĕлнĕ вĕсем сумлă хăнасенчен. Афган вăрçин ветеранне Юрий Хрисанович Васильева тата Байконур космодромĕн ветеранне Николай Иванович Васильев запасри офицера та ăшă калаçушăн чунтан тав тăваççĕ педагогсемпе ачасем.

Каламалла, вĕренекенсем паттăр ентешсене халалласа лартнă Астăвăм палăкне тата ун таврашне тирпейлĕхре тытассипе те çулталăк тăршшĕпех тăрăшаççĕ. Çак кунсенче те вĕсем ку территорие юртан тасатнă, ун патне пыма çул уçнă. Хăйсен ырă ĕçĕпе, тăрăшулăхĕпе астăвăма упрама пулăшнине лайăх ăнланаççĕ вĕсем.

**Ирина ПЕТРОВА**

## СЛУЖБА ПО КОНТРАКТУ




**400 тыс. руб. единовременно (при заключении контракта на срок от года и более);**

**2 100 000 руб. единовременно (региональная денежная выплата);**

**от 210 тыс. руб. в месяц (в зависимости от воинского звания, должности и выслуги лет).**

**По вопросам контрактной службы можно обратиться по адресу: п.Вурнары, ул.Советская, д.20 (администрация округа), каб. 307 с 8 до 17 часов. Тел. 8(83537) 2-51-87, в военный комиссариат по Ибресинскому и Вурнарскому районам.**

**Т. 8-937-397-30-09 (круглосуточно).**

2025 Год Защитника Отечества в России
80 ПОБЕДА!
Год Победы и патриотизма в Чувашской Республике

# Список лиц, представленных к вручению медали «За доблестный труд в Великой Отечественной войне 1941–1945 г.г.»

*(Продолж. Начало в №77–80, 82–93, 1–5)*

**По Булатовскому колхозу им.Молотова**

Тимофеева Анна – колхозница
Тимофеева Фекла Актисовна – колхозница
Трофимова Евдокия Трофимовна – колхозница
Ухтерикова Ксения – пахарь
Федорова Ольга Никитична – колхозница
Федорова Евдокия Федотовна – подросток
Федоров Василий Федорович – колхозник
Федорова Мария Петровна – многодетная колхозница
Федорова Анастасия – колхозница
Федорова Евгения Петровна – колхозница
Шапошова Анна Федоровна – колхозница
Юсова Елизавета Харисановна – колхозница
Юсова Вера Николаевна – колхозница
Юсова Александра Николаевна – колхозница
Яшина Александра Яковлевна – колхозница
Яковлева Ирина Игнатьевна – доярка
Яшина Евгения – колхозница, мобилизована на лесозаготовку – лесоруб
Яшина Галина Федоровна – колхозница
Яковлева Нина Николаевна
Яшина Валентина – колхозница
Яковлева Анна Яковлевна – колхозница

**По Сявалкас-Хирпосинскому колхозу «Колхозница»**

Андреева Акулина Филипповна – птичница
Ананьева Нина Ананьевна – подросток
Андреева Мария Андреевна – доярка
Александрова Ольга Егоровна – табаковед
Алексеева Христина Григорьевна
Алексеева Ольга Алексеевна
Алексеев Григорий Алексеевич – конюх
Андреева Анна Андреевна
Андреева Анастасия Андреевна – доярка, подросток
Алексеева Мария Алексеевна
Андреев Павел Андреевич – подросток, охранник
Андреев Яков Андреевич
Андреева Раиса Порфирьевна – подросток, 1931 г.р.
Афанасьева Раиса Андреевна – подросток, овчар, 1930 г.р.
Афанасьева Евдокия Васильевна
Алексеева Евдокия Алексеевна – молодая колхозница
Алексеева Анна Алексеевна
Алексеева Александра Алексеевна – зав. фермой
Алексеев Тимофей Алексеевич
Викторов Герасим Викторович
Валин Леонид Емельянович – кассир
Васильев Степан Васильевич
Ведин Константин Андреевич – старик, кузнец, 1869 г.р.
Варламов Калистрат Варламович – подросток, 1933 г.р.
Герасимова Мария Герасимовна – зав. пасекой
Герасимова Евгения Григорьевна
Григорьева Пелагея Григорьевна – свинарка
Григорьева Ольга Григорьевна – подросток, овчар
Герасимова Анна Герасимовна
Егоров Игнатий Егорович
Ефремова Анастасия Гурьевна
Егорова Анна Егоровна – подросток, доярка
Ефимов Максим Ефимович
Елышева Иустиния Захаровна – молодая колхозница
Ермолаева Елена Ермолаевна
Игнатьева Евдокия Игнатьевна – подросток
Иванова Александра Осиповна
Иванова Пелагея Матвеевна
Иванова Анна Ивановна
Ильина Елизавета Ильинична – подросток
Игнатьев Павел Игнатьевич – бригадир
Кукша Перасковья Афанасьевна
Капитонова Валентина Капитоновна – подросток
Козлова Елена Прокопьевна
Леонтьев Павел Леонтьевич – подросток, конюх
Леонтьева Зина Леонтьевна – подросток, 1932 г.р.
Муравьева Перасковья Степановна
Муравьева Наталия Михайловна
Михайлова Анна Михайловна
Максимова Агапия Максимовна – молодая колхозница, доярка
Максимова Анна Максимовна – завхоз
Марков Василий Маркович – подросток, пахарь
Матвеева Евдокия
Николаев Нестер Николаевич – подросток, пахарь
Осипов Александр Осипович
Прокопьев Николай Прокопьевич – старик, охранник,1868 г.р.
Петров Николай Петрович – подросток, конюх, 1930 г.р.
Репицин Василий Григорьевич – подросток,1930 г.р.
Скворцов Алексей Николаевич – плотник, конюх
Степанова Наталия Степановна
Степанова Мавра Степановна
Семенова Варвара Семеновна – пожилая
Скворцова Нина Алексеевна – подросток
Тимофеев Алексей Тимофеевич – звеньевой, табаковед
Тимофеев Егор Никифорович – мельконтролер
Тимофеева Варвара Тимофеевна – подросток
Тимофеев Петр Тимофеевич – подросток, пахарь, 1930 г.р.
Фомина Ольга Фоминична
Федорова Варвара Федоровна
Шмыкова Пелагея Петровна – звеньевая

**По Кюстюмерскому колхозу им.Крупской**

Антонов Василий Антонович
Алексеева Мария Семеновна
Антонова Анастасия Антоновна
Адиков Павел Григорьевич – старик
Адикова Татьяна Павловна – доярка
Алексеев Иван Алексеевич – бригадир
Архипова Мария Архиповна – ударница по лесозаготовке
Архипов Николай Архипович
Архипов Николай Архипович
Архипова Мария Николаевна
Анисимова Перасковья Павловна – вдова
Андреева Перасковья Федоровна
Архипова Елена Тимофеевна – вдова
Алексеева Мария Борисовна – птичница
Алексеева Ольга Федоровна
Антонов Андрей Антонович – колхозник, фронтовик
Алексеев Николай Никитич – старший конюх
Архипова Валентина Павловна
Архипова Варвара Павловна
Алексеева Александра Александровна – имеет 4 детей
Бойцов Семен Николаевич
Борисова Евгения Борисовна – агротехник
Башкирова Анна Николаевна – жена инвалида ВОВ
Воронцова Перасковья Фоминична
Васильева Евдокия Ивановна – жена фронтовика, имеет малолет. детей
Викторов Александр Викторович – мельник
Викторова Елена Андреевна
Васильев Егор Васильевич
Васильев Павел Васильевич – фронтовик
Выросова Клавдия Никитична – вдова
Выросова Агапия Ивановна
Васильев Николай Борисович – сын погибшего на фронте отца, работает вместо отца
Владимирова Клавдия Павловна – муж на фронте
Выросова Наталья Николаевна
Васильева Клавдия Никитична – вдова
Владимиров Петр Владимирович
Григорьев Степан Григорьевич – колхозник, фронтовик
Григорьева Татьяна Григорьевна
Гаврилова Перасковья Петровна – вдова, имеет 4 маленьких детей
Григорьева Елена Сергеевна – свинарка
Громова Татьяна Павловна
Громова Анна Степановна
Григорьев Роман Иванович – председатель колхоза

**От редакции: Уважаемые подписчики! Если у ваших родных из данного списка лиц имеются фотографии, просим их принести или отправить в редакцию: по эл. почте press_vurnar@rchuv.ru, svetok11@mail.ru, по Телеграм, Ватсап, Вайбер по тел. 89373722600.**

**Список исследован краеведом из д.Хорнзор Федором КУЗЬМИНЫМ**

*(Продолжение следует)*

## ПУШАР ХĂРУШСĂРЛĂХĔ

# Йĕркене пăхăнăр, сыхă пулăр!

**Пушар – хăрушă инкек. Ытла та пысăк хуйхă илсе килет вăл. Ĕмĕр тăршшĕпе пухнă пурлăхсăр та, пурнăçсăр та хăварма пултарать. Çакă пурин те асăрхануллă пулмаллине пĕлтерет: инкек тухма сăлтавсем ан пулччăр!**

Çапах та хăрушлăх çав-çавах пурха. Асăрхав тата профилактика ĕçхĕлĕн уйрăмĕн пуçлăхĕ Алексей Петров пĕлтернĕ тăрăх, пĕлтĕр пирĕн округра виçĕмçулхинчен ытларах пушар алхаснă – 42 тĕслĕх (2023 çулта – 39). Анчах чи хăрушши вара – вут-çулăмра çынсем вилни нумайланни. Шел те, пĕлтĕр çак синкерсенче ултă çын пурнăçран сарăмсăр уйрăлнă, виçĕмçул вара – пĕрре. Çынсем ӳт-пĕвне, сывлăхĕсене сиенленисем те пур: иртнĕ çул ун пеккисем тăххăрăн пулнă.

Уйрăммăн тишкерес-тĕк, инкексен шучĕпе чи пысăк ӳсĕм Вăрнар (7–9), Калинино (2–5), Аçăмçырми (0–2) территори пайĕсенче çырăннине палăртаççĕ. Унсăр пуçне, Уппер, Ершепуç, Кĕçĕн Кипек, Çавалкас тăрăхĕсенче пушарсем пĕлтĕр виçĕмçулхинчен пĕрер ытларах тухнă. Синкерлĕ тĕслĕхсем пирки калас-тăк, пушарсем вăхăтĕнче Кĕçĕн Кипек (виççĕ), Ярмушка (иккĕ) тата Ершепуç (пĕрре) территори пайĕсенче çынсем вилнĕ.

Анчах мĕн пирки пулаççĕ-ха çакăн пек хăрушла инкексем? Асăрханулăх-сыхлăх пирки тем чухлĕ аса илтерсен те, пушарсен сăлтавĕсем ялан тенĕ пекех пĕрешкелех. Асăрхав тата профилактика ĕçхĕлĕн уйрăмĕн тишкерĕвĕ тăрăх, вĕсем – çаксем:

- чи анлă сарăлни – çулăмпа асăрханусăр пулни (çав шутра – сигарет туртнă чух та) – 13 тĕслĕх;
- электрооборудование вырнаçтарас тата ĕçлеттерес правилăсене пăсни – 9;
- кăмакасен, тĕтĕм çулĕсен юсавсăрлăхĕ тата вĕсемпе хăрушсăрлăх йĕркине уямасăр усă курни – 8;
- бензомоторлă оборудованипе асăрханусăр пулни – 3;
- газ оборудованийĕн тĕрĕс мар эксплуатацийĕ – 2;
- çиçĕм çапса çулăм тивертни – 1 тата ытти сăлтавсем.

**МЧС служби асăрхаттарать:** хальхи вăхăтра та пушар тухас хăрушлăх пысăк тапхăр. Çакă хĕлле кил-çуртсене, хваттерсене хутса ăшăтнипе – кăмакасемпе, электроприборсемпе тата газ оборудованийĕпе ытларах усă курнипе – çыхăннă. Çавăнпа та тӳрлетейми йăнăшсем ан тăвăр – хăрушсăрлăх правилисене пăхăнăр!

**АСРА ТЫТĂР:**

- Харпăр хăй ăсталанă ăшă приборĕсене çутма, ĕçлекен электрорадиаторсене сăнавсăр хăварма, вĕсем çинче япала типĕтме юрамасть.
- Электровилкăсемпе розеткăсен те хĕрсе каймалла мар – çакă прибор юсавсăрлăхĕн е электросеть пысăк тиевпе ĕçленин палли.
- Уçă çулăм – хăрушлăх çăлкуçĕ. Çурт-йĕре газ плитипе ăшăтни япăх вĕçленме пултарать.
- Çуртра кăмака хутатăр-тăк, вăл юсавлă, шăтăк-çурăксăр тата тĕтĕм çулĕ мачча витĕр тухакан вырăн хăрушсăр пулмалла. Кăмакана ытлашши хĕртсе яма юрамасть.

Çак ансат правилăсене пăхăнăр, сыхă пулăр! Хăвăра та, пурлăха та вут-çулăм сиенĕнчен упрăр!

**Ирина ЯКОВЛЕВА**

## ПРИГЛАШАЮТ НА РАБОТУ






# Асăрханулла пулăр!

**Роспотребнадзорăн Чăваш енри Управленийĕ çаврӑнăшра апат-çимĕç продукцийĕ – А.М.Коротков уйрăм предприниматель хатĕрлекен пĕрчĕллĕ лосось вăлчи – пуррине пĕлтерет.**

Кăрлач уйăхĕн 15-мĕшĕнче Роспотребнадзорăн Иркутск облаçĕнчи управленийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, потребитель чĕркемĕнче кăтартнă адреспа – Иркутск облаçĕ, Ангарск хули, 10-мĕш микрорайон, 47-мĕш çурт, 149-мĕш пом. – нимĕнле пĕрчĕллĕ лосось вăлчи те кăлармаççĕ. Раççей аккредитацийĕн официаллă сайтĕнче те çак апат-çимĕçе хаклани пирки нимĕн те пĕлтермен, кирлĕ требованисене пăхăннине кăтартман.

Çапла вара çӳлерех асăннă продукцие йĕркене пăхăнман çынсем паллă мар условисенче туса кăларнă. Лосось вăлчи сывлăхшăн сиенлĕ пулма пултарать. Çавăнпа та çак продукцие сутакансен асăрханулла пулмалла.

Енчен те А.М.Коротков предприниматель çаврӑнăша кăларнă апат-çимĕçе асăрхасан Роспотребнадзорăн Управленине пĕлтермелле. Адресĕ: Шупашкар хули, Мускав проспекчĕ, 3-мĕш «Д» çурт. Электронлă почта: sanit@21.rospotrebnadzor.ru тата osn@21.rosportrebnadzor.ru

**Н. ЛУГОВСКАЯ, ертӳçĕ.**

## ТАВ ТĂВАТПĂР



Чунтан юратнă çыннăмăра – мăшăра, аннене, хунямана, асаннене, кукамая, йăмăка, аппана, инкене, кинемее – Çĕрпелте çуралса ӳснĕ, ĕçленĕ, мăшăрлă пулса ачисене çитĕнтернĕ Валентина Алексеевна Гавриловăна (Федоровăна) йывăр чир пирĕнтен яланлăха уйăрчĕ. Çак хуйха пирĕнпе пайланăшăн, юнашар пулса тĕрев панăшăн, пур енлĕ пулăшнăшăн тĕрлĕ çĕрте пурăнакан мĕнпур тăван-пĕтене, хурăнташ-пĕлĕшсене, унпа пĕрле ĕçленисене, юлташсене, Çĕрпелти ферма тата ача сачĕн коллективĕсене, «Янгорчино» ял хуçалăх кооперативне, Çĕрпел ялĕн пĕтĕм халăхне чун-чĕререн тав тăватпăр, ырлăх-сывлăх, ăнăçу сунатпăр. Кашнине çĕре çити пуç таятпăр. Турă нумай-нумай çул кашни кун ыррине çеç патăрччĕ сире.

**Мăшăрĕ, ачисем, кинĕсем, кĕрӳшĕ, 6 мăнукĕ, аппăшĕн, виçĕ йăмăкĕн, шăллĕн çемйисем.**


**Главный редактор АУ «Редакция Вурнарской районной газеты «Çĕнтерӳ çулĕ» («Путь победы») Минцифры Чувашии – С.В.ЧИКМЯКОВА.**

Учредители – Министерство цифрового развития, информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики, АУ «Редакция Вурнарской районной газеты «Çĕнтерӳ çулĕ» («Путь победы») Минцифры Чувашии.
Газета зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике – Чувашии, свид. ПИ № ТУ 21-00227 от 2 октября 2012 года.

**Адрес редакции и издателя:** 429220, Чувашская Республика, п.Вурнары, ул.Советская, д.15, 2-й этаж.
**Адрес типографии:** 429220, Чувашская Республика, п.Вурнары, пер.Коммунальный, 4.

НАШИ ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор – 2-52-30, редакторы, прием рекламы – 2-52-57, менеджер – 2-55-57, типография – 2-59-40.

**Ответственность за точность приведенных фактов, опубликованных в газете, несут авторы, рекламодатели. Рукописи не рецензируются, не возвращаются. Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Ⓟ**

**Индекс издания П4304.**
Печать офсетная. Объем 1 п.л.
Тираж 3493 экз. Заказ 31.

**Çĕнтерӳ çулĕ (Путь победы)**
Газета выходит на чувашском языке два раза в неделю – по вторникам и субботам.
Время подписания в печать – 14 ч. 30 мин. По графику – 15 ч.
Отпечатано в типографии АУ «Редакция Вурнарской районной газеты «Çĕнтерӳ çулĕ» («Путь победы») Минцифры Чувашии.